# Чёваи прозин ёсти

Ю.Скворцов

***СКВОРЦОВ Юрий Илларионович***

(11.1.1932, д. Хорнкасы Моргаушского р-на— 11.8.1977, Чебоксары) — прозаик, поэт, член СП СССР (1964). Окончил Чувашский государственный педагогический институт (1956). Работал редактором Чувашского книжного издательства (1956—65), в редакции журнала «Таван Атал». Автор текстов ряда популярных песен: «Пурсан тутар» (Шелковый платок), «Куккук» (Кукушка) и другие. Перевел на чувашский произведения Я.Купалы, С.Есенина. Произведения Скворцова исследователи характеризуют как художественно-философскую литературу. Книги: «Сурам хёрё» (Девушка с берегов Сормы, 1959), «Сын ашши» (Тепло людское, 1969, 1978), «Савапла вут» (Священный огонь, 1982),

«И все стало иным» (1985).




Ю.И. СКВОРЦОВ
Юрий СКВОРЦОВ



# ШУХĂШЛĂ ÇЫНЧЧĔ

Юрий Скворцов тесен, ялан тенĕ пек шухăшлă çын сăнарĕ асăма килет. Вăл мана нихăçан та ĕç çинчен манса кайнă пек туйăнмастчĕ. Çын хушшинче те пуçа канăç паман сюжет-сăнара кун-çул пӳрме тăрăшнă пекчĕ. Тăташ туртнăран та, сăмах сахал вакланăран та çаплаччĕ-и, тен, çакă? Пуçа чикерех çӳренĕрен те-и? Тĕм-хура çӳçĕ те çак туйăма ӳстеретчĕ пуль.

Ăна эпĕ чылай хушă пĕлсе тăтăм. Пирĕн пĕр-пĕрин пе çывăх туслашса тăрасси пулман. Пурпĕрех ăна курнипе, унăн ĕçне-хĕлне пĕлсе пурăннипе кăмăл ăшăнатчĕ, ĕçлес туртăм çĕклен етчĕ. Сайрарах та хыттăн кулатчĕ. Ун пек чух вăл вара ĕçрен вăранса урăх тĕнчене лекнĕ пекехчĕ. Тивĕççĕр усал ят илтме тивнĕ чухне те хуçăлса ӳкмен пек курăнатчĕ. Пăйкăшмастчĕ. Хăй тĕрĕслĕхне хытă ĕненсе тăни сисĕнетчĕ.

Чи малтанхи ăсилӳ çапла. 1955 çул. Эпĕ тин кăна Шупашкара килнĕ, пединститута вĕренме кĕнĕ. Ю.Скворцовăн вара вĕренсе тухасси инçех мар. Унăн ячĕ вăл вăхăтрах ăмсантара пуçланăччĕ. Сăввисем журналсенче тăтăш туха пуçланăччĕ, вĕсем сăмах илемĕпе илĕртетчĕç. Авторĕ сумлă çыравçă пулас шанчăк вăйлăччĕ.

Пединститутăн кивĕ çурчĕ. Ытларах тăвататтăмĕш хутра вĕренеттĕмĕр. Вĕренӳ çулĕ пуçлансанах манран сăвăсем пама ыйтрĕç. Студентсен литература хаçатне кăларасшăн иккен. Патăм. Кĕçех хаçачĕ те тухрĕ. Унта манăн «Текерлĕк» сăвва кăларнă. Эрнерен-и, çук-и — вырăсла стена хаçачĕ те тухрĕ, «Перец» ятлăскер. Юлашки юпинче (колонкăра) — «Пессимист» ятлă статья. Ӳкерчĕк те пур, тĕрлĕ сăрпа ӳкернĕ: ешĕл улăхра пĕр йĕкĕт текерлĕке сăнать, итлет. Эпĕ илемлĕ улăхра кайăк.канăççăр вĕçни çинчен, хурланса кăшкăрни çинчен çырнăччĕ. Унта юлашкинчен çапла каланă:

Те кичем сана та
Çӳреме пĕччен?

Пессимисчĕ эпĕ иккен. Сăвва тата статьяна сӳтсе явма литпĕрлешӳ ларăвне пухрĕç. Аслăрах курссенчи юлташсем те пынăччĕ, вăл йышра — Ю.Скворцов та. Тусĕ çукран тунсăхлани çинчен çырнăччĕ эпĕ. Хăшĕ-пĕри пикенсех:

— Халăхран уйрăлса кайнă! — тет.

Тавлашкаласан-тавлашкаласан, Ю.Скворцов çапларах каларĕ:

— Чип-чипер лайăх сăвă, интимлă лирика япали. Ним тиркешмелли те çук. Кашни сăвăра халăха хирĕçле ĕç шырамалла мар, — терĕ кĕскен.

Пурте унпа килĕшмерĕç те пулĕ, аслăрах юлташ хутăма кĕрсе хак пани манăн асăма ĕмĕрлĕх кĕрсе юлчĕ. Тавлашу лăпланасси те çакăнтан килчĕ пулас.

Мана пессимист тесе каласси вара часах сĕврĕлеймерĕ. Асăннă сăвăшăн та, ыттисемшĕн те «Вузовец» хаçатра институт ректорĕ К.Евлампьев та çак сăмахпах ятланăччĕ. Вăл вăхăтра эпир кăларнă стена хаçачĕсен номерĕсене те турта-турта антарнăччĕ, пире пухусенче сăмахпа çаптарса илчĕç, унта-кунта чĕнсе илсе тĕпчерĕç... Анчах чун ыратăвĕ çинчен çырмасăр тӳсейместĕм. Çыравçă ĕçĕн тĕллевĕ çавă пек туйăнатчĕ. Текерлĕк çинчен эпĕ татах çырсаттăм, хама та пĕр хушă «Текерлĕк» текенсем пурччĕ.

1959 çулта «Çеçпĕл çеçкисен» иккĕмĕш кĕнеки пичетленсе тухрĕ. Ăна пухса хатĕрленĕ чухне Ю.Скворцов манран та ятарласа сăвăсем ыйтрĕ. Виççĕшне пичетлерĕç. Унта эпĕ «Салам» псевдонимпа çапăннă. Çапла çак хисеплĕ юлташ тимлевне эпĕ те ытти çамрăксен йышĕнчен аякра тăрса юлмарăм, пĕрремĕш хут кĕнекере тухма тивĕçлĕ пултăм.

Тĕл пулкаланă хушăра ĕçĕм-пуçăм çинчен ыйткаласа пĕлетчĕ. Акă Митта Васлейĕн тăван кĕтесĕнче педпрактикăран вăхăтлăха таврăнсан, унта çырнă сăввăмсемпе интересленчĕ, хăш-пĕрне ырларĕ. Эпĕ кайран хăш-пĕрне пăрахăçларăм пулас, ыттине якатса улăштартăм. Çапла хутшăнни ĕçре тĕплĕрех пулма май паратчĕ.

Уйрăмах тепĕр самант куç умĕнче. Геннадий Айхи Шупашкара килсен, пĕр каçхине ятарласа хваттерĕмре кĕреке пухнăччĕ. Унта Юрккa та пынăччĕ (ăна çапла чĕнеттĕмĕр). Вăл малтанах çыравçăсен съездне килнĕ тусĕсемпе тĕл пулса хĕрнĕччĕ пулас. Ĕçкелесен-çикелесен, юрлама тытăнтăмăр. Сĕтел хушшинче хунямa та ларатчĕ. Вăл Самар чăвашĕсен юррисене юрласа савăнтарчĕ. Уйрăмах киле таврăннă салтак суя сăмаха-элеке пула арăмне вĕлерни çинчен калакан «Вун саккăра кайрăм та...» юрра юрланине тĕлĕнсе итлерĕç. Хамăр та чылай юрă асилтĕмĕр. «Хура тур лашине...» тахăшĕ пуçларĕ — те Юрккaх, те мăшăрăм (вăл та çав юрра питĕ кăмăллать). Юркка ăна питĕ ăста кăларать иккен, хулăн сассипе васкамасăр илсе пырать. Айхи ăна халиччен илтмен пулас. Сăвви-кĕвви илемлĕрен те, Юркка аван юрлама пултарнăран та, тен — хăй тусне çине-çинех çакна юрлаттарчĕ. Лешĕ туртăшса тăмарĕ. Кайран Айхи çак юрра К.В.Иванов çинчен ӳкернĕ «Асран кайми» документлă фильма та кĕртрĕ (унта ăна урăх çын юрлать). Чăнах та, ку юрăра ваттисен пехиллĕ сăмахĕ хитре кĕвĕленнĕ.

Çавăн чухнех-ха, сĕтел хушшинче туртма чарман пулин те (Айхи тăташ туртмасăр тӳсейместчĕ), Юркка ик-виçĕ хут та коридора тухса туртрĕ, вырăнтах ларма хушнине итлесшĕн те пулмарĕ. Ăна хăйне тӳрĕ тытма йывăртарахчĕ ĕнтĕ, вăл пурпĕрех тирпейлĕ те асăрхануллă пулма тӳсĕм çитерчĕ, хăй сума сăвакан ватă çынпа кил-йыш умĕнче йĕркерен тухмарĕ.

Мана Юрий Скворцов чĕлхемĕр пуянлăхĕпе ăста усă курни, вăл мĕскĕне юлнă çынсен хутне кĕме тăрăшни ăмсантаратчĕ, халĕ те çапла. Кулленхи хутшăнура эпир пĕр-пĕрин пурнăçĕпе ĕçне пит уяса çитерейместпĕр. Кайран ӳкĕнӳ çеç юлать иккен: çумăнти юлташу пин ытăн пек хаклă пулнă-мĕн, эсĕ унран çителĕклĕ вĕренсе юлманнишĕн хăвна ху шеллетĕн, хăвна алă панăшăн тав туса ĕлкĕрейменшĕн хурланатăн, ăна хăйне те кирлĕ чухне пулăшайманшăн пăшăрханатăн...

Геннадий ЮМАРТ



# «УКАХ ХУРĂНĔ»

## повесть çинчен

*Юрий Скворцов çуралнăранпа 70 çул çитнĕ май*

Кашни çыравçăн пултарулăх тути-маси хăйле. Юрий Скворцовшăн ку уйрăмах тĕл килет. Чăваш прозинче пĕртен-пĕрре вăл: жанр сĕрелти те, çырас мехелĕ-хăрти те, геройсен ăшĕ-чикки те – никамăннипе пăтрашми ун. Çакна “Уках хурăнĕ” повеçре те уççăнах туятпăр. Кунти тĕп сăнар – Укахви – Нарспие, Салампие аса илтерет пек. Таса чунлă, идеала тивĕç, çирĕп шăнăрлă героиня вăл. Путех, харкам хайлĕхĕ те питĕ пысăк ун. Сурăм тăрăхĕнчи /Элĕкпе Муркаш тавралăхĕ/ халап-легендăран, чăн пурнăçран, кунти халăхăн историллĕ кун-çулĕнчен шăтса тухнă сăнар. Писателĕн тантăшĕ, çывăх тусĕ пулнă Н.Л.Яковлев художник-график çапла ас илсе кăтартать: повеçри Коля прототипĕ вăл иккен, хайлавра та ӳнерçĕ пек сăнланă ăна. Укахви те чăн пурнăçран илнĕ никĕс çинче хывăннă: вăхăтсăр çĕре кĕнĕ, хĕне кайса асап курнă хĕр пулнă вăл. Ольгăпа Хеветле те Скворцовăн унпа пĕр ӳсĕмри, пĕр ялти тантăшсем. Анчах ку кăна шăнăрламасть повесть идейине.

Вăрçă вăхăчĕ. Укахви саккăрмĕш класс пĕтермесĕрех шкул пăрахать, ача çулĕнчен “васкавлăн” тухать, çитĕннĕ çынсемпе танлашать. Вĕсенчен кая юлмасăр, е ирттересе те утă çулать, тырă вырать, окоп шăтăкĕ чавать, торф кăларать... Васкавлăх ыт ахальшăн вĕтетнĕ сăмах мар, тарăн шухăшлă символ. Текех туратлансах, тарăнлансах пырать вăл... Утă çулнă вăхăт – Коля /кану вăхăтĕнче/ Укахвие /пулас савнине/ ӳкерсе хурать. Пăхать те ĕç йышĕ: хăй çулĕсенчен аслăрах ӳкнĕ-мĕн пике. Ма васкатнă-ши ун кун-çулне Коля? Хăй те сисмесĕр, тен. Анчах кун-çул ӳпĕнчĕкĕ епле çулпа каясса туйса та пуль... Илĕм-тилĕм те уçăлман-ха, Укахви вара вăрман витĕр тырă анине утать – çĕр варринче; вырма. Çулĕ – пылчăклă та кĕске-мĕн. Каллех пĕрме-пĕччене хăварма юраман деталь – “васкавлăн” “кĕскелсе” пырать хĕрĕн повеçри пурнăçĕ. ...Виççĕмĕш сăнлăх та çавнах тăрлать. Вĕсен ялĕнче Уках ятлă пĕр хĕр пулнă-мĕн. Пĕчĕк Укахви /айван çулсенчех/ ăна илешет, лешĕ айванккана хурлăхлă юрăсем юрласа парать /хурлă, теветкеллĕ шăпа пиллет пĕчĕк хĕр пĕрчĕкне/. Укахви Уках пулса юлать. Ячĕ те кĕскелет ун çапла. Ахальтен-им, повеçе те çыравçă “Уках хурăнĕ” тесе ят панă. Эппин-тĕк, чăн пулни /ялта Укахви ятлă хĕр пурăнни, повеçри Уках сăнарĕ/ кунта ытарлă халапа куçать, Укахвин шăпи вăрçă тапхăрĕнче кĕскелсе-кимĕлсе пынине ĕнентерет.

Халапĕ тепĕр чух чăна та

çавранать. Акă хĕрупраç вăрман витĕр тухнă чух икĕ кайăк /Шанпа Шак/ пĕр-пĕринпе "калаçнине" тăнлать вăл. Тахçан вĕсем пĕр-пĕринпе туслă ачасем пулнă, анчах тăмана вĕсене çунаттипе çапса хăварнă та, халĕ вĕсем тек ĕнтĕ пĕр-пĕрне нихăçан та тупаймĕç. Каллех символла ытарлăх: Кольăпа Укахви çине шак хуни – икĕ савни те тек кураймĕç пĕр-пĕрне; Кольă вăрçăра çÿренĕ хушăра Укахви чирлесе çĕре кĕрĕ "васкавлăн". Тĕлĕнмелли çук, самана синкерне ăша илсе çак хĕр торф шăтăкĕ алтать /вилĕм шăтăкĕ теме те пулать-тĕр/, окоп чавать сурса сурчăк ÿкми сивĕре /каллех вилĕм шăтăкĕ/. Е тата: тул çутăласси инçе-ха, шуçăм та хăймалана пуçламан. Укахвие вара темле хура вăй вырăн çинчен илсе тухать çĕр варрине. Тĕттĕм вăрманпа уттарать ăна. Çул çинче ăна вăрман кушакĕ /рысь/ тапăнать, аллисене чĕп-чĕр юн тăвать. Ку ĕнтĕ каллех синкер варкăшĕ. Килтех тимĕрпе айкашатчĕ-ха пике. Алли сурнине тимĕр кроватьрен тытса ирттересшĕнччĕ. Анчах амăшĕ калани те асрах: тимĕр ÿт ăшшине туртать иккен. Çенĕке тухсан тимĕр витре хăрушшăн чанклатса хăратать героя. Пĕрех, хăй хул пуççи çине тимĕр çурла çакать. Çав çурла çăлать те ăна вилĕмрен.

"Васкавлăх", "кĕскелĕх", "шăтăк" ...идейи те тăтăш ахрăмланса пырать кунта. Повеçе персонаж ыратуран пырса кĕрет – ал хурси сурать ун. Çав ырату илсе тухса каять те ăна хире, вăрман /ют территори/ урлă. Чĕп-чĕр юн пулса, "кăвакарса кайнă" сăнпа çитсе тухать этем хире. Укахви вун икĕ соттăх вырнă çĕре тăрса тухнă тантăшĕсем тиркештереççĕ те хăйсен хĕр тусне, ĕçпех хуçăлса вилме пултарасса ас тутараççĕ. Ку – программа. Тÿнтер вăй астарса тухса кайнă Укахви, чăнах та, ĕçпе, ĕçре хуçăлса вилет: окоп чавнă çĕрте шăнса пăсăлать, торф кăларнă чух хура шыврa тăрса ĕçлет. Ара, хĕне кайса выртакан Уках /повеçри хĕр/ пирки те çапла каламанччĕ-и-ха Укахвин амăшĕ! Ĕçпех амансa вилчĕ, тенĕччĕ. Эппин Укахвие те çав шăпа тивĕçет. Апла пулин те, хура вăя пакапар, пĕр тан вăйпа хирĕç тăрать хĕр, вилĕм умĕнче чысне çухатмасть, ятне ямасть, утнă сукмак çине "курăк шăтма" памасть.

Тен, шăп çавна тĕл килÿллĕ пуль Скворцов хăй дневникĕнче çырса хуни: "Ĕмĕр вăл – йывăç /улмуççи/, çынсем /улмисем/. Вилĕм... çулçисене татса çăва шăтăкне пăрахать, çулçи те чакмасть, çăва шăтăкĕ те тулмасть. Пурнăçĕ те вăйлă, вилĕмĕ те вăйлă. Пĕр япалан икĕ енĕ çеç вĕсем". Вăл çеç-и? Укахви курни: улмуççин сип-симĕс çулçисемех татăлса ÿкеççĕ, çĕр çинче пăлхавлă ташă сĕтеççĕ. Кайран шăтăка ăсанаççĕ. Ку вăл – Укахви хăй шăпине сисни. Акă епле! – ахальтенех хурăн тухмасть ума, хĕр сăнарĕ кĕретленнĕ унра, çав йывăçра. Йывăçĕ вара – хĕрĕн кĕскелсе вĕçленнĕ ĕмĕрĕ. Пурнăç çулĕ. Шыв пекех /шыва та пурнăç çулĕ тетпĕр-çке!/. Шывĕ вара пăтравлăччĕ-ха, торф шăтăкĕнчи шыв; хуп-хураччĕ вăл. Кун-çул хури пек. Асап витĕр тухса, хурлăх çулĕпе çÿл тÿпене çĕкленет Укахви. Пурнăç йывăççин варрипе. Тĕлĕкĕнче вăл хăйне шур пĕлĕтсенчен тÿшек чыхнă пеккĕн курать. Хурăн таврашĕнчи шыв вара – янкăр тăрă, Укахви пулас ăрусемшĕн хăварнă таса халал пек вăл...

Мĕнре-ши эппин Скворцовăн никампа пăтрашмаслăхĕ?! Вăл хăй калас шухăша туратланса пыракан çĕршер символ çинче никĕсленинче. Шыв, васкав, кĕскелĕх, Укахви, Уках; халапсен ытарлăхĕ – кашниех нумай пĕлтерĕшлĕ пайрăм... Вĕсем кăнаи? Çул, вăрман, улăх, шăпчăк сасси, вут... сăнарĕсем те çавăн пекех тулли, нумай енлĕ, тарăн. "Уках хурăнĕ" повесть чăваш прозин чи паха тĕслĕхĕсенчен пĕри, унăн ылтăн çÿпçинче ĕмĕрех упранас хайлав.

**Георгий ФЕДОРОВ профессор.**

# СӐН ӲКЕРЧӖК АСА ИЛТЕРЧӖ...



Кивӗ сӑн ӳкерчӗксене алла илетӗп те – кунсем-ҫулсем витӗр ӗлӗкхи туссем, ҫамрӑклӑх тапхӑрӗнчи юлташсем куҫ умне шуса тухаҫҫӗ. Вӑхӑчӗ пӗр шелсӗр чупать пулин те ҫав самантсем халӗ те асран тухмаҫҫӗ, ӑшӑ асаилӳсемпе ҫупӑрлаҫҫӗ.

Ку ӳкерчӗке тунӑранпа та ҫур ӗмӗре яхӑн. Сахал мар шыв-шур юхрӗ унтанпа, анчах та ун ҫинче ӳкерӗнсе юлнӑ ҫынсем халӗ те куҫ умӗнчех. Сӑн ӳкерчӗк хыҫне ҫапла ҫырса хунӑ: "Пединститут спартакиадинче чӑваш чӗлхипе литератури уйрӑмӗнчи ҫӗнтерӳҫӗсем сылтӑмран сулахаялла: Юрий Скворцов /пӗрремӗш хӑма/, Николай Мартынов /иккӗмӗш хӑма/, Михаил Волков /виҫҫӗмӗш хӑма/, Никита Ларионов /тӑваттӑмӗш хӑма/. 1954 ҫулхи майӑн 29-мӗшӗ, "Энергия" стадион, ЧГПИн ҫуллахи спорт уявӗ."

Сӑн ӳкерчӗке лекнисем пурте пӗр вӑхӑтра вӗреннӗ. Литература ӗҫӗнчен те, спортран та аякра тӑман вӗсем. Михаил Волковпа эпӗ пединститутран 1955 ҫулта вӗренсе тухрӑмӑр, Николайпа Юрий – тепӗр ҫулхине.

Юркка Скворцов вӗреннӗ чухнех композиторсемпе ҫыхӑну тытатчӗ. "Пирӗн яла пырса кӗрсен" сӑввине те шӑпах ҫав ҫулсенче юрра хывнӑ пек астӑватӑп. Каярах – 1966 ҫулта – "Ялав" журналта манӑн малтанхи калав пичетленсе тухрӗ. Ӑна Юрий редакцилерӗ. Кӗнеке редакторӗ те вӑлах пулмаллаччӗ. Шел те, хӑрушӑ вилӗм алли ӑна вӑхӑтсӑр пурнӑҫран уйӑрса кайрӗ... Николай Мартынова института вӗренме кӗриччех "заочно" пӗлнӗ – унӑн "Ялав" журналта "Каҫарӗ-ши вӑл мана?" калавӗ пичетленнӗччӗ. Кайран вӑл ӑста прозаик, сӑвӑҫ, темиҫе кӗнеке авторӗ пулса тӑчӗ, литературӑра хӑйӗн йӗрне хӑварчӗ. Шел, халӗ вӑл та пирӗн хушӑмӑрта ҫук...

Михаил Волков филологи ӑслӑлӑхӗсен кандидачӗ пулса тӑчӗ. Унӑн "Чӑваш букварӗпе" шкул ачисем вуламаҫырма вӗренеҫҫӗ, пӗлӳ тӗнчине ҫул уҫаҫҫӗ. Литература ӗҫӗнчен те ют мар Михаил Константинович – "Ҫеҫпӗл ҫеҫкисем" кӗнекен пӗрремӗш кӑларӑмӗнче сӑвӑ пичетленсе тухнӑччӗ.

Питӗ ӑшӑ витӗм туятӑп эпӗ ҫак сӑн ӳкерчӗкрен: асран кайми тус-юлташсем, асран тухми кунсем-ҫулсем...

**Никита ЛАРИОНОВ.**




1\. Уявра та ĕç çинче
Пурçăн тутăр пуçĕнче.
«Çăмăл» тесе ма тиркес,
Кам тутрине чăн пĕлес.
Тутăр пана фермăран
Сар çу нумай пухнăран. } 2 хут

2\. Хĕлĕн-çăвĕн фермăра,
Йышлă хăна ун тавра.
«Шухă» тесе ма тиркес,
Кам килнине чăн пĕлес.
Хăна килнĕ аякран
Хĕр ĕçĕпе паллашма. } 2 хут

3\. Каять-килет васкавар
Шупашкара, Мускава.
«Чупкăн» тесе ма тиркес,
Ма кайнине чăн пĕлес.
Хĕр депутат пулнă май
Хулара ун ĕç нумай.
Депутат та пулнă май
Пур çĕрте те ĕç нумай!..

## САНА ÇЕÇ ЧĔРЕМ СУЙЛАРĔ

Кĕвви *Г. Хирбюн* — Сăвви *Ю. Скворцовăн*

Не спеша. С большим чувством









1. Шап-шурах çеçке çуратчĕ
Çĕмĕрт çуркунне,
Çавăн чух сана ăсатрăм,
Тусăм, çул çине. Ах!
Çавăн чух сана ăсатрăм,
Тусăм, çул çине.

2. Сана çеç чĕрем суйларĕ,
Ĕмĕрлĕх тесе.
Сана çеç савса пурнатăп,
Чунăмпа кĕтсе. Ах!
Сана çеç савса пурнатăп,
Чунăмпа кĕтсе.

3. «Эп куккук пулса килетĕп»,—
Терĕн ун чухне.
Халь мĕн-ма-ши эс сисместĕн
Ăшăм çуннине? Ах!
Халь мĕн-ма-ши эс сисместĕн
Ăшăм çуннине?

4. Сан ятна аса илмесĕр
Кун иртмест-çке ман.
Шухăшра та, ĕмĕтре те
Эс манпа ялан. Ах!
Шухăшра та, ĕмĕтре те
Эс манпа ялан.

5. Тунсăхлать чĕрем телейшĕн,—
Авлансам, туйсам.
Пулас çук телейлĕ эпĕ
Сансăр нихăçан. Ах!
Пулас çук телейлĕ эпĕ
Сансăр нихăçан!

## АСАТТЕ ЕМĔЧĔ

Асаттене асам кĕслеçĕ тенĕ,
Пысăк кĕсле тума вăл ĕмĕтленнĕ.
Хĕлĕхсене карас тенĕ ту-сăртран,
Тепĕр вĕçне — ял-ял урлă — вăрманта

Каласассăн çавă кĕслепе —
Юрă кайĕ тенĕ тĕнчипе.

Аслă халăх тунă-мĕн çав кĕслене,
Мускавра-мĕн карнă хĕлĕхне.
Халь калаççĕ çавă кĕслепе —
Юрăсем каяççĕ тĕнчипе.

Асаттене асам пахчаçă тенĕ,
Пĕр улмуççи лартма вăл ĕмĕтленнĕ.
Улмуççине лартас тенĕ тинĕсе —
Ял-ял çине усăнайччăр туратсем.

Каç килсессĕн ылтăн улмисем
Пулччăр тенĕ çутă çăлтăрсем.

Аслă халăх лартнă-мĕн çав йывăçа —
Пур çĕрте те — Анăç-тухăçа.
Ун турачĕ ял-хула çинче,
Улмисем çунаççĕ килсенчех.

Асаттене асам çемьеçĕ тенĕ,
Ывăльсене текех вăл ÿкĕтленĕ:
Кинсем кĕртес çĕр ситмĕл халăхран,
Çемье тăвас пур халăхран тăван.

Пур сынсемшĕн пултăр пĕр телей,
Пур этемшĕн пултăр пĕр тĕллев.

Аслă халăх тунă-мĕн çав çемьене —
Çĕр те çитмĕл халăх семйине.
Халь тăвать-çке ырлăх телейне —
Асаттеçĕм юмах янине.

## ХУРА ХĔР

Хĕвел мар сан йăл куллу та,
Уйăх мар сан сăн-питÿ.
Мана пурпĕр çунтаратăн,
Хура тусăм, хура хĕр.
Ыр чуну çеç ăш хĕвел сан —
Чăн чăвашăн чун-чĕри.
Саррине те, тен, тĕл пулăп,
Тен, тĕл пулăп сыррине —
Пĕр эс çеç ман чун хавалĕ,
Хура кусăм, хура хĕр.
Кирлĕ мар мана сарри те,
Ни сырри те кирлĕ мар.
Мамăк мар сан аллусем те —
Ĕçре писнĕ хыт алсем.
Ах, епле эс çупăрлатăн,
Пĕр ултавсăр хура хĕр!..
Чĕререн саваканне те
Сансăр урăх тупас çук...
Юрруна тăсса яран та —
Шăпчăкках сасси пулмин —
Чунăма-çке ырă, ырă...
Лутра тусăм, хура хĕр.
Кирлĕ мар мана никам та —
Сансăр урăх кирлĕ мар!